27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 3 ШАМАТКУН 109(6604) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырпула çумкурăксенчен тасатсах тăрар

Çуракине вĕçлемелли фронтовой вунăкунлăхăн малтанхи пилĕк кунĕнче республикăри 10 районĕ çураки туса пĕтерчĕ. Ытти районсенче те нумай колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçлерĕ.

Колхоз уйхирĕсенче вăхăтра та лайăх акнă çуртырисем тикĕс шăтса тухрĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсене агротехника тăрăх тĕрĕс пăхса ÿстермелле задача тăрать. Тырпула тухăçлă пултăр тесен, ăна çумкурăксенчен тасатсах тăмалла. Хальхи вăхăтра ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăсенчен пĕри — колхозниксемпе колхозницăсене çум çумлама мобилизацилесси пулса тăрать.

Çумкурăксем колхоз уйхирĕн чи усал тăшманĕ пулса тăнине кашни колхозник пĕлет. Çумкурăксем, тырпула ÿссе ситĕнме кирлĕ нÿрĕке, тăпра сĕткенне илсе, çĕре ишперлетеççĕ. Тырпула çумкурăксенчен тасатни — тăпрари нÿрĕке, тырăсене кирлĕ апат-çимĕçе ытларах сыхласа хăварни, тырă тухăçлăхне ÿстерни, государствăна фронт валли тырă ытларах парассишĕн тата ĕçкунĕсем тăрăх ытларах валеçессишĕн кĕрешни пулать.

Çумкурăксем тырă тухăçлăхне кăна мар, ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсен пахалăхне те чакараççĕ: сухалама чăрмантараççĕ, тырпула вырса пухнă чухне кансĕрлеççĕ, вăрлăхсене тасатас ĕçе те йывăрлатараççĕ. Тракторпа сухаланă чухне, вĕсем плуг тимĕрĕсене хуппине хапласа, шăйрак хăвартараççĕ, селялкăсен сошникĕ çумне пуçăнса, вăрлăха тикĕс акăнма чăрмантараççĕ. Тракторпа сухаланă чухне вĕсене пула горючи те ытларах расходланать. Çумкурăксем ялхуçалăхне тата ытти нумай енĕпе те сиен кÿреççĕ.

Çумкурăксене вăхăтра пĕтерни — тырăсене сайралса юласран, тĕрлĕ хурт-капшанкăран тата кăмпаллă чирсенчен хăтарни пулать.

Пирĕн республикăри нумай колхозсем çакна лайăх ăнланса илнĕ. Кăçал çураки вăхăтĕнче çумăрлă кунсем пулчĕç. Тырă калчисем ÿсе вăй иличчен çумкурăксем малтан ситĕнеççĕ, вăхăтра çумламасан, вĕсем тырă калчисене хупласа та илме пултараççĕ.

Вăйлă тырпулшăн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пирĕн колхозсем çумкурăксене хирĕç кĕрешме тытăнчĕç. Çак ĕçе лайăх организациленĕ колхозсем тырă калчисене тахçанах çумласа пĕтернĕ. Ку ĕçре Красноармейски районĕнчи колхозсем ыттисенчен малта пыраççĕ. Çак районта ĕнтĕ 400 гектар ытла сумланă. «12 лет Октября» колхоз (председателĕ Васильев юлташ) кăçал тырăсене çумламалли планне тултарнă. «Красный пахарь», «Волга» тата ытти колхозсем те пысăк ĕçсем туса пыраççĕ.

Калинин районĕнче те çум çумлас ĕçе анлăн туса пыраççĕ. «Çуттала», «Броневик», Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче ĕнтĕ çум çумлама тытăннă. «Броневик» колхозра çум çумлас ĕçе агроном Воробьев юлташ хăй ертсе пырать.

Çум çумлас ĕçе çураки пĕтессе кĕтсе тăмасăрах организацилемелле. Ку ĕçе çамрăксемпе шкул ачисене анлăн явăçтармалла. Етĕрне районĕнчи «Парижская Коммуна» колхозра (председателĕ Зыбин юлташ) паянхи кун тĕлне ытти калчисемпе çуртыррисене 150 гектара яхăн çумкурăксенчен тасатнă. «Правда» колхозра иккĕ кун хушшинче 12 гектар çумланă.

СССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленире партипе советсен органĕсене, агроперсонала, колхозсен правленийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене 1944 çулта çумкурăксене хирĕçле татăклă мерăсем йышăнма хушрĕç. Çак кăтартăва пурнăçлас тĕлĕшпе партипе советсен органĕсем, колхозсен правленийĕсем вăхăтра çумламаллине пĕлсе тăмалла.

Кăçал кашни колхозра çумкурăксенчен тасатмалли планне тунă, çумкурăксемпе кĕрешмелли звеносем организациленĕ. Вăрлăх участокĕсенче çумкурăксене ятарласа тасатмалла.

Анчах уйрăм колхозсенче кĕрешÿ çителĕксĕр пулса пырать. Çум çумлас ĕçе пăрахса хăварни, çумкурăксене вăхăтра тасатманни тырпула сиен кÿрет. Çавăнпа та çак ĕçе хăвăртрах вĕçлемелле.

Парти организацийĕсем, ялсоветсем, колхозсен правленийĕсем çум çумлас ĕçе лайăх организацилемелле, ĕçре пĕрре те вăхăт çухатмалла мар. Çумкурăксене хирĕç кĕрешÿ — пысăк тухăç илессишĕн кĕрешни. Çак ĕçе ăнăçлă ирттерни вăйлă тырпул пухма пулăшать.

Пахалăх комиссийĕсен çум çумлас ĕçĕн пахалăхне тĕплĕн тĕрĕслесе тăмалла, начар туна ĕçе параххăçламалла.

Партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсем тырăсене çумкурăксенчен тасатасси тавра массăллă-ăнлантарулă ĕçе анлăн туса пыма, вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăрту хумне татах та çÿлерех çĕклеме тивĕçлĕ.

КОЛХОЗСЕМ ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ЕЛЧĔК, июнĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне районри колхозсем 21.144 гектар тырă акнă. 22 колхоз çуртыррисен акмалли плана пĕтĕмпех тултарнă, 33 колхоз тĕштырăсене акса пĕтернĕ, вĕсенче халь çĕрулми лартаççĕ.

Анчах юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Уйрăмах «Коммунист», «Новая Волна», «Свобода» колхозсем юлса пыраççĕ. Çураки ĕçĕсене йăлтах пĕтернĕ хыççăн «Марс» колхоз «Коммунист» колхоза хăйĕн лашисемпе 100 гектар акса пачĕ. Халĕ «Марс» колхозăн лашисем «Новая Волна» колхозра ĕçлеççĕ. Унта вĕсем 30 гектар ытла акаççĕ. Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та «Заря» колхоза 60 гектар акса пачĕ. Халĕ Тимешсен лашисем «Свобода» колхозра ĕçлеççĕ, унта вĕсем 30 гектар акмалла. «Комбайн» колхоз та кÿршĕри колхозсене 60 гектар хăйĕн лашисемпе сухаласа тата акса пачĕ. Район паян-ыранах çураки ĕçĕсене вĕçлет.

В. МАРКОВ.

Планран ирттерсе акаççĕ

Ишлей районĕнчи Вăрман Сĕнтер ялсоветĕнчи «Парижская Коммуна», «1-ое Мая» колхозсем тата Салапайкасси ялсоветĕнчи «Акара» колхоз тĕштырăсем акса, çĕрулмисем лартса пĕтерчĕç.

Çак колхозсенче вăрлăх участокĕсене агротехника хушнă пек акса хăварнă. Унта ĕçлеме ятарласа звеносем тунă.

«Парижская Коммуна» колхоз ферма çумĕнчи участока 1,2 гектар викăпа сĕлĕ хутăштарса акнă, «Акара» колхоз ферма çумĕнчи участока 5 гектар утă-лăх клевер акнă. Çак колхозсенче халĕ планран ирттерсе фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонда 2 гектар тулăпа урпа акнă. «Акара» колхоз çураки планне тултарнă хыççăн юлса пыракан колхозсене ĕç вăйĕпе лашасем ярса пулăшать.

Агроном Г. СЕРĔБРЯКОВ.

Малти рете тухассишĕн

Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз (председателĕ К. Булатов юлташ) апрелĕн 30-мĕшĕ тĕлнех пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене акса пĕтерсе районра чи малти вырăна тухрĕ, пĕтĕм çураки ĕçне, çĕрулмипе кантăр акассисĕр пуçне, майăн 2-мĕшĕ тĕлне вĕçлерĕ. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене майăн малтанхи çурринчех лартрĕ.

Çураки ĕçне плапа 8 кун хушшинче пĕтерме пăхнăччĕ. Ĕçе лайăх пĕлсе йĕркеленĕ май, пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсемпе çĕрулми лартас ĕçе 5 кун хушшинче вĕçленĕ. Акнă тырăсем тикĕс шăтса, лайăх ÿсни колхозра çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туни çинчен каласçĕ.

«Красный Октябрь» колхоз çуракине пур енчен те хатĕрленсе тухрĕ. Лашасем кунта вăтам ÿт-тирлĕ пулнă, ака ĕçĕ вăхăтĕнче вĕсене хиртех апатлантарнă, час-часах кантарса ĕçленĕ. Ака ĕçне хутшăннă колхозниксем уйрăм сдельщинăпа ĕçленĕ.

Çураки ĕçĕнче колхозниксем çĕрнекунне пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Акакансем Ваизе Якушевăпа Т. Закирова юлташсем 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 5 гектар акас вырăнне 6,5—7-шер гектар акрĕç. Сухаçсем Р. Селихов тата М. Вахитов юлташсем 1,2 гектар вырăнне 1,40—1,50 гектар сухаларĕç.

Колхоз кăçал ака ĕçĕсене пысăк пахалăхпа ирттерни ватă, пысăк опытлă колхозниксене ĕçе явăçтарнипчен нумай килнĕ. Пахалăх комиссийĕнче ватă колхозниксем С. Рахматуловпа Я. Салеев юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçе йышăннипе çеç канăçмаççĕ, ĕçе хăйсем хутшăнаççĕ тата хĕрарăмсемпе çамрăксене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса, пулăшса пыраççĕ.

Колхозра ĕçе звеносем тăрăх организациленĕ. Çакăн пек туни ĕç пахалăхне ÿстерет, ĕçе хăвăртрах тума май парать.

«Красный Октябрь» колхоз çуракине вĕçленĕ хыççăн Алманчăри Ленин ячĕпе тăракан колхоза пулăшрĕ, 20 гектар çĕрне сухаласа, акса пачĕ.

Иртнĕ çул «Красный Октябрь» колхоз вăйлă тырпул туса илнĕшĕн райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ. Çав ялава кăçал та колхозрах хăварассишĕн тата республикăра малта пыракан колхозсен ретне тăрассишĕн колхозниксем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Районри ытти колхозсен те «Красный Октябрь» колхоз пек ĕçлеме условисем пур. Çак колхозăн примерĕпе ĕçлесен, пирĕн район та ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пыма пултарать. Анчах пирĕн нумай колхозсем çаплипех сÿрĕк ĕçлеççĕ-ха.

М. МИРОНОВА,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

СССР орденĕсемпе медалĕсене пани

Июнĕн 2-мĕшĕнче, Шупашкарта, Советсен çуртĕнче, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕ хушнипе, наградăланисене ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пачĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене сыватас тĕлĕшпе госпитальсенче хастарлăн ĕçленĕшĕн тата халăх хушшинче чир сарăласси́не хирĕç кĕрешмелли мероприятисене ăнаçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Çĕмĕрлери врач Л. М. Архангельская юлташ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илет. Ун хыççăн государство хăрушăсăрлăхĕн подполковникĕ А .И. Куклин юлташ, Сĕнтĕрвăрринчи «Крестьянский кузнец» артель председателĕ пулнă, халĕ Чăвашпромсоюз председателĕ пулса ĕçлекен Н. М. Титов юлташ, Главскотооткормăн Сĕнтĕрвăрринчи совхоз директорĕ Ф. М. Моисеев юлташ «Знак почета» орденĕсем илчĕç.

«За трудовое отличие» медальсем Çĕмĕрле больницинчи операционнăй сестра В. А. Колесникова, «Лесоруб» артель председателĕ А. С. Мачкасин, Сĕнтĕрвăрринчи «Крестьянский кузнец» артель тимĕрçи И. И. Кудашов, Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри бригадир А. В. Горбунова юлташсем тата «За трудовую доблесть» медальсем Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи мастер Н. З. Ильина, Шупашкарти индпошив мастерскойĕнчи çĕвĕçĕ М. И. Николаева, Заготскотăн Улатăрти конторин кăтÿçи Г. П. Емашев, Сĕнтĕрвăрри судоверфĕнчи мастер А. М. Белов, Сĕнтĕрвăрри судоверфĕнчи тимĕрçĕ Ф. И. Краличкин юлташсем илеççĕ.

Наградăланисен ячĕпе Л. М. Архангельская, А. И. Куклин, Н. М. Титов юлташсем сăмах тухса калаçрĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕсенче партипе правительствăна тав туса, малашне татах та лайăхрах ĕçлеме пулчĕç.

Орденсемпе медальсем панă хыççăн З. А. Андреева юлташ кĕске сăмах тухса каларĕ. Вăл награда илнĕ юлташсене саламларĕ тата ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума сунчĕ.

* * *

Çав кунах Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ командованин боевой задачийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланă, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче вилнĕ офицерсен орденĕсене пачĕ. Отечественнăй вăрçăн пĕррĕмĕш степень орденне старши лейтенант Н. Д. Зарубин ашшĕне Д. М. Зарубин юлташа, капитан Т. Н. Кухарев арăмне А. А. Кухарева юлташа, Отечественнăй вăрçăн иккĕмĕш степень орденне гварди старши лейтенант П. Я. Борков амăшне А. Н. Боркова юлташа пачĕ.

Çуракине вĕçлемелли вунăкунлăх

Çуракинче тухăçлă та лайăх ĕçленĕшĕн, ĕçсыннн депутачĕсен Муркаш райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп Хăми çине кĕртнĕ:

49. **«Крестьянин» колхоз** (председателĕ **М. И. Вязов** юлташ). Колхоз çуракине лайăх пахалăхпа, 8 ĕçкунĕнче ирттернĕ, çĕрулми лартса пĕтернĕ. Ферма çумĕнчи участокра 2,5 гектар акнă. Çуракинче уйрăмăнах **И. С. Садовников** тата **Е. В. Королькова** бригадисем лайăх ĕçлесе чапа тухнă.

50. **Свердлов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Т. В. Налимов** юлташ). Колхоз çуракине 9 ĕçкунĕнче туса пĕтернĕ. Планран ирттерсе ферма çумĕнчи участока 1,5 гектар акнă. Çĕрулми лартассине вĕçленĕ. Çуракинче уйрăмах **Клавдия Ковалева** бригади лайăх ĕçленĕ, вăл çуракине 5 ĕçкунĕнче вĕçленĕ.

51. **Атапай ялсовечĕ** (председателĕ **М. В. Бынова** юлташ). Ялсоветне кĕрекен пур колхозсем те çуракине 9 ĕçкунĕнче вĕçленĕ. Çĕрулми лартса пĕтернĕ.

52. **Çатракасси ялсоветĕнчи «Пионер» колхоз** (председателĕ **Сергеев** юлташ). Колхоз çуракине 7 ĕçкунĕнче вĕçленĕ. Çĕрулми лартса пĕтернĕ, ферма çумĕнчи участока 2,5 гектар акнă. **З. Г. Теплова** юлташ ертсе пыракан бригада çуракине 6 ĕçкунĕнче пĕтернĕ.

53. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Васильев** юлташ). Колхоз 113 гектар акса хăварнă, çуракине 7 ĕçкунĕнче вĕçленĕ, ĕç пахалăхĕ аван. Планран ирттерсе ферма çумĕнчи участока 1,5 гектар акнă. Уйрăмах **М. П. Петрова** юлташ ертсе пыракан бригада чапа тухнă.

54. **«Красное Сормово» колхоз** (председателĕ **П. Н. Майков** юлташ). Колхоз 230 гектара 7 ĕçкунĕнче акса пĕтернĕ, çураки планĕнчен ирттерсе 5 гектар акнă. Уйрăмах **Г. А. Белов, Е. А. Архипова** тата **И. Г. Волков** бригадисем чапа тухнă.

55. **«Броневик» колхоз** (председателĕ **Г. М. Матвеев** юлташ). Колхоз çуракине 8 ĕçкунĕнче вĕçленĕ, ĕç пахалăхĕ лайăх, çĕрулми лартса пĕтернĕ. **П. Иванов** юлташ бригади лайăх ĕçленĕ.

56. **Каганович ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Варламов** юлташ). Колхоз çуракине 8 ĕçкунĕнче, пысăк пахалăхпа вĕçленĕ. Çĕрулми лартса пĕтернĕ, ферма çумĕнчи участока 1,5 гектар акнă.

1944 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсенче çураки ĕçĕсем мĕнле пынине кăтартакан СВОДКА

Районсем	Пурĕ акнă иртнĕ çулхи кураксемсĕр пуçне (процентпа)	Вăл шутра: Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши тырăсене акнă (процентпа)	Вăл шутра: Çĕрулми лартнă (процентпа)	Вăл шутра: Кантăр акнă (процентпа)	Вăл шутра: Махорка акнă (процентпа)	Вăл шутра: Йĕтен акнă (процентпа)	Фермăсем çумĕнчи участоксене акнă (процентпа)
Красноармейски	101,1	104,1	100,0	9,3	0,9	—	80,7
Сĕнтĕрвăрри	100,9	102,9	100,4	72,5	—	—	37,0
Чурачăк	100,8	102,3	100,5	100,0	50,0	—	26,9
Çĕрпÿ	100,6	102,6	100,0	100,0	24,4	—	92,8
Вăрнар	100,2	109,4	91,9	102,6	0,2	83,0	52,0
Элĕк	100,1	105,2	76,2	89,5	—	—	40,7
Сĕнтĕр	100,1	100,9	97,5	97,7	—	—	39,6
Шупашкар	100.1	100,0	100,1	104,0	—	—	24,8
Калинино	100,0	106,0	91,5	86,0	25,7	—	59,5
Муркаш	100,0	100,0	90,9	8,8	—	—	48,0
Октябрьски	97,7	100,2	90,8	59,1	—	—	8,6
Вăрмар	96,8	97,0	64,7	74,0	—	—	117,5
Куславкка	95,4	102,6	75,2	37,5	—	—	16,3
Ишлей	94,7	97,6	80.1	59,1	—	—	32,9
Шăхасан	93,9	100,1	66,5	71,2	—	—	76,0
Елчĕк	91,3	95,0	64,1	87,0	—	—	44,2
Советски	90,2	91,1	82,7	78,6	—	—	36,0
Етĕрне	90,2	97,4	64,0	66,8	—	58,0	35,0
Канаш	89,3	101,5	47,0	65,4	—	—	27,6
Тăвай	88,9	97,1	47,5	22,2	4,6	12,0	88,0
Комсомольски	87,0	91,8	37,4	56,4	—	—	25,5
Йĕпреç	78,2	93,1	29,4	69,0	10,0	45,5	14,1
Чкаловски	73,3	78,3	27,6	40,2	—	—	26,2
Çĕмĕрле	73,3	88,1	35,7	52,0	2,0	37,0	13,0
Первомайски	70,4	73,7	38,3	75,7	—	26,0	33,7
Улатăр	68,9	82,9	13,7	—	38,0	8.8	18,5
Пăрачкав	67,9	74,7	38,4	—	20,5	34,3	32,0
Хĕрлĕ Чутай	65,4	77,4	33,6	19,5	—	—	41,0
Шăмăршă	64,4	69,1	13,0	22,8	—	42,0	44,1
Кувакино	56.7	64,5	16,5	—	2,5	12,8	40,2
Шупашкар хули	101,3	128,6	92,0	—	—	—	60,0
Пĕтĕмпе	88,7	93,7	69,3	64.7	13.6	30.3	42,6
Майăн 25-мĕшĕ тĕлне пулнă	76,2	86,9	33,4	31,7	6,8	19,2	—

„Заря" колхозра

Шăмăршă районĕнчи «Заря» колхоз нумай çул хушши малта пырать ĕнтĕ. Кăçал пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене вăл майăн 15-мĕшĕнчех акса пĕтерчĕ.

Пысăк тухăçлă тырпул тата çĕрулми туса илессишĕн колхозниксем тимлĕн ĕçлеççĕ. Уйрăмах Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Алексей Цыганов ертсе пыракан 2-мĕш бригада лайăх ĕçлет. Çак бригада майăн 14-мĕшĕ тĕлне уйри мĕнпур тырăсене акса пĕтерчĕ, ĕç пахалăхĕ те аван. Çуртыррисем тикĕс те пĕр харăс шăтса, лайăх ÿсеççĕ. Çак бригадăри сухаçăсем Яков Васильев, Иван Матвеев кулленех нормăна 175—200 процент тултарса ĕçлерĕç.

Г. Кириллов колхозник çуракине хатĕрленнĕ чухне сÿсмексемпе ĕнерчĕксем юсас тĕлĕшпе ĕçлерĕ, çураки вăхăтĕнче вăл акрĕ. Нормăна яланах ытлашшипех тултарса пычĕ, пахалăхпа акрĕ.

Çуртырри калчисем кар шăтса тухнă, колхозниксем вĕсем çине пăхса, çапла калаççĕ:

— Иртнĕ çул эпир ĕçкунĕ пуçне 1,6 килограмм тырă илнĕччĕ, кăçал 2 килограмран кая мар илетпĕрех, — теççĕ. Калчасем çинче пĕр çумкурăкĕ те çук, вĕсене çийĕнчех тасатса тăраççĕ.

Колхоз вăрлăх валли уйрăм участок акса хăварчĕ, участок тавра юпасем лартса тухнă. Ăна пăхса ÿстерес енĕпе уйрăм звено ĕçлет.

Лашасем çураки вăхăтĕнче ывăннисем пулмарĕç. Конюхсем Вера Тимошкина, Варвара Андронова сухалакансемпе яланах уйра пулчĕç. Каннă вăхăтра лашасене çитеретчĕç, вăхăтра шăваратчĕç. Колхозниксем çак кунсенчех ирхи çĕртме тума тытăнаççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсен пĕр кăмăл — кăçал кирек мĕнле çанталăк тăрсан та кашни гектартан çĕр пăтран кая мар тĕштырă, 120 центнертан кая мар çĕрулми туса илесси. Çак шухăша пурнăçлассишĕн колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн иртнĕ çул эпир ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илтĕмĕр. Çак хисеплĕ ялава кăçал та хамăр колхозрах хăварассишĕн кĕрешетпĕр, — теççĕ колхозниксем

Е. ТИМОФЕЕВА

ИРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАÇÇĔ, КАЛЧАСЕНЕ ÇУМКУРĂКСЕНЧЕН ТАСАТАÇÇĔ

КАЛИНИНО, июнĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем çуракине ăнаçлăн вĕçлерĕç. Колхоз хирĕсенче кĕрхипе çурхи тырăсен калчисем, тикĕс те пĕр харăс шăтса тухнăскерсем, сип-симĕс ешĕрееççĕ. Малта пыракан «Çуттала», «Броневик», «Трактор», «Большевик», «Правда», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем çураки ĕçне лайăх пахалăхпа, агротехникăллă мероприятисене анлăн пурнăçласа, 6—9 кун хушшинче вĕçлерĕç. «Çуттала» колхоз 197 гектар вырăнне—206 гектар, «Броневик» колхоз 214 гектар вырăнне—218 гектар акрĕç. «Большевик» колхоз çураки планне 127 процент тултарчĕ. Халĕ колхозсенче колхозниксен кил вырăнĕсенче çĕрулми лартаççĕ тата пахча-çимĕçсем акаççĕ. Районĕпе пурĕ 950 гектар çĕрулми лартмалла, 870 гектар лартнă. Пахча-çимĕçсем план тăрăх 190 гектар акмалла, 120 гектар акнă. Çак кунсенчех ку ĕçсене те туса пĕтереççĕ.

Çураки ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçленĕ колхозсем ирхи çĕртме тума тытăнчĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ А. Воробьев) паянхи кун тĕлне 30 гектар ытла ирхи çĕртме тунă, ку ĕçе ытти колхозсенче те пуçăннă.

«Çуттала» колхозра (председателĕ А. Емельянов) калчасене çумкурăксенчен тасатаççĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне кунта 23 гектар çумланă, «Первое мая» колхоз та 25 гектар çинчи, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 28 гектар çинчи калчасене çумкурăксенчен тасатнă. Районĕпе ĕнерхи кун тĕлне 224 гектар çумланă.

Х. ЛИСИН.
(Хамăр корр.).

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Çуракине ăнаçлăн вĕçленĕ хыççăн районри колхозсем кĕрхи тата çурхи тырăсене çумкурăксенчен тасатма тытăнчĕç. Именевăри «Малалла» колхоз майăн 31-мĕшĕнче 50 гектар çинчи тулла çумкурăкран тасатрĕ. Ку ĕç ытти колхозсенче те анлăн пырать.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Комсомол организацийĕ çуракине ертсе пымасть

МУРКАШ, майăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). ВЛКСМ Центральный Комитечĕн 12-мĕш пленумĕн решенине сÿтсе-явнă хыççăн комсомолăн хăшпĕр пуçламăш организацийĕсем чылай лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Янăш ялсоветĕнчи «Красный борец» колхозри комсомолецсем, çуракинче кăтартуллăн ĕçленипе пĕрлех, çамрăксем хушшинче ăнлантарулă ĕçе вăйлатрĕç. Комсомол организацин секретарĕ Н. Ахманов юлташ çамрăксене пленум решенийĕпе паллаштарас тата комсомол историйĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарас тĕлĕшпе ятарласа кружок организациленĕ. Кружок занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Çав кружока çÿрекенсенчен 6 çамрăк комсомола кĕчĕç.

Комсомолăн Тельман ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш организаци те çак ялсоветнех кĕрет. Анчах кунта ĕçсем пачах урăхла. Вĕсем паянхи куна çитсе те ВЛКСМ Центральный Комитечĕн 12-мĕш пленумĕн решенине сÿтсе-явман. Çамрăксем кунта йышлăн. Анчах вĕсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе пуçарса яман. Çавăнпа ĕнтĕ комсомолецсен йышĕ те ÿсмест. Кăçал пĕр çамрăка та члена илмен. Комсомолецсен пухăвĕсем те вăхăтран-вăхăта кăна пулса иртеççĕ.

Калас пулать, колхозра çураки ĕçĕ ытла та вăраххăн пырать. Уйрăмах комсомолка П. Семенова юлташ ертсе пыракан бригада юлса пырать. Комсомолецсен ĕç дисциплини питех те япăх. Вĕсем çуракине тивĕçлипе хутшăнмаççĕ. Сăмахран, Данилов комсомолец кирек-хăçан та ĕçе йĕркеллĕ тухмасть. ВЛКСМ организацин секретарĕ (вăлах ялсовет исполкомĕн секретарĕ пулса ĕçлет), хăй ĕçре пример парса пырас чухне, çураки пуçланнăранпа та уя тухса курман, комсомолецсем мĕнле ĕçленипе пачах та интересленмен.

И. ГРИГОРЬЕВ

Йывăççем лартса хăварчĕç

Вăрнар районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал сад-пахчи тума йышăнчĕç. Халь колхоз садне пурĕ 1.500 тĕп йывăç лартрĕç. Йывăççене ватă колхозник В. Кузьмин пăхса тăрать. Йывăç лартас ĕçре М. Орлова, Т. Федорова, В. Никонорова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç

А. ПАВЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЯССЫ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçĕнче тăшман пехотипе танкĕсен пур атакисене те ăнăçсăр сирсе янă. Малтанхипе илнĕ даннăйсем тăрăх, кун каçиччен пирĕн çарсем нимĕçсен 18 танкне тата 15 самолетне пĕтерсе ўкернĕ.

Тĕрĕсленĕ даннăйсем тăрăх, пирĕн çарсем Яссы хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçĕнче районра икĕ кун хушшинче çапăçусенче, майăн 30-мĕшĕпе 31-мĕшĕнче, нимĕçсен 148 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 197 самолетне персе ўкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче палла улшăнусем пулман.

Майăн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем, мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 56 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 110 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Яссы хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшман танкĕсемпе пехотин атакисене хирĕç кĕрешнĕ. Совет чаçĕсем, тупăсемпе, минометсемпе тата пулеметсемпе персе, нимĕçсен пур атакисене те сирсе янă. Уйрăм участоксенче совет танкĕсемпе пехоти нимĕçсене хирĕç тĕмĕсе тухнă те ăнăçлă çапнă. Пĕр чаçри боецсем гитлеровецсен 3 атакине пĕрин хыççăн теприне сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 çитми вилли, çунса кайнă 17 танкĕ тата 8 бронемашини юлнă. Тепĕр участокра румынсен пехотин пĕр полкĕ пирĕн позицисене атакăланă. Танаххан тăшмана хаяран ăнăçсăр хыççăн, совет боецĕсем хăйсем контратакăна кĕрсе кайнă. Румынсем совет боецĕсем пырса çитиччен чăтса тăраймасăр, тарма тытăннă. Çак румынсене нимĕçсен хыçалта тăракан отрячĕ автоматсемпе тата пулеметсемпе пере пуçланă. Нимĕçсем пулăшнипе те мыçе çĕр румын пĕтнĕ.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсен пехотин пĕр батальонĕ танкĕсем пулăшнипе пирĕн позицисене атакăланă. Икĕ сехет хушши пынă çапăçура тăшмана çĕнтерсе пирĕн боецсем тăшмана шăтăк вĕсĕн тытса илме пултарайман. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 100 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединенири артиллеристсемпе минометчиксем тăшман йышăнса тăракан вырăнти тĕллевсене пенĕ. Нимĕçсенне 5 тупăпа 8 пулемет пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн пĕр подразделенири снайперсем 5 кун хушшинче 30 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Рядовой Мельников 13 гитлеровеца вĕлернĕ, снайпер Левадный—5, снайпер Зинаида Архипова 4 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Рябов лейтенантăн разведчикĕсем кăнтăрла тăшман траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Çавăн пек кĕтмен çĕртен тапăннипчен хăраса ўкнĕ нимĕçсем хирĕç тăрса çапăçма пултарайман. Пирĕн боецсем, автоматсемпе персе, пĕр ушкăн гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă, унтан пĕр нимĕçе тыткăна илсе хăйсен чаçне аванах каялла таврăннă. Гварди старшини Сметнев ертсе пыракан снайперсен ушкăнĕ, засадăра ларса, виçĕ кун хушшинче 14 нимĕçе вĕлернĕ. Çамрăк снайпер Данилов юлташ 4 нимĕç салтакне вĕлернĕ, снайперсем Камынинпа Шеретнев юлташсем кашни икшер нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

«Лачплесис» ятлă отрядри латыш партизанĕсен ушкăнĕ фронталла пыракан нимĕçсен автоколоннине тапăннă. Автоматсемпе тата ручной пулеметпа персе, совет патриочĕсем çăмăл автомашинăна вут хыптарнă, машина çинче ларса пыракан 3 нимĕç офицерне вĕлернĕ. Унтан партизансем нимĕçсем пĕр-пĕрне пеме пуçланă. Çавăн чухне 15 нимĕç салтакне вĕлернĕ. Латыш партизанĕсен «Вистурс» ятлă отрячĕ икĕ кун хушшинче нимĕçсен 4 çар эшелонне ўпĕнтерсе янă. Партизансем хĕрĕшĕпе пулă чугун çулăн питех те кирлĕ участокĕнче поездсем 5 талăк хушши çўреме пултараймарĕç.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронтăн пĕр участокĕнче нимĕçсен 293-мĕш пехотнăй дивизинчи 512-мĕш полкри 7-мĕш ротин унтер-офицерне Вальтер Фатернамма тытса илнĕ. Çак унтер-офицер — фашист, нимĕн пăхмасăр пуç касакан палач, ку ĕçпе вăл нумай ĕçленĕ. Тĕрĕслесе пĕлнĕ тăрăх, Фатернамм 1937 çулта гестапона ĕçлеме кĕнĕ. Берлинри Александерплац районĕнче шанчăксăр çынсене палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен ятăрлă взводра пулнă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, «Телефункен» завочĕн пĕр рабочине Фриц Шульцена, Берлинри Целендорф Паулюсштрассе урамĕнчи 25-мĕш çуртра пурăнакансене, Нойкельнри «Иоганнштрассе» урамĕнчи 23/3-мĕш çуртра пурăнакан рабочине Пауль Гизене тата ыттисене те нумайăшне асаплантарса вĕлернĕ. Совет Союзĕпе Германи фронтне лекнĕ хыççăн та çак Фатернамм гестаповец ĕçне пăрахман, ĕçрен кăларса халăха асаплантарнă.

Ирсĕр фашист совет граждансене те нумай персе вĕлернĕ. Çак чунилли старикне те, хĕрарăмсене те, пĕчĕк ачасене те хĕрхенсе тăман. Допросра вăл çапла калаçа кăтартнă: «Орел районĕнчен каялла чакнă чухне эпир Александровка ялне вут тĕртсе ятăмăр, ялти пĕтĕм халăха хĕвеланăçнелле тухса кайма хушрăмăр. 3 хресчен—эпир хамăрăн çунса кайнă ялтах юлатпăр, кунтан ниçта та тухса каймастпăр, терĕç. Рота командирĕ Штейнмец капитан пана приказ тăрăх, эпĕ вĕсене персе пăрахрăм. Тепĕр тĕлте çавăн пек каялла чакнă чухне эпир пĕр ялти пĕтĕм мирлĕ халăха, вăл шутра стариксемпе пĕчĕк ачасене те, хăваласа кăлартăмăр. Çул çинче пĕчĕк ачасем ывăннипе кая тăрса юлма пуçларĕç, хăшĕ-пĕрисем ўкме тытăнчĕç. Икĕ пĕчĕк ача, 4-шар çулта пулĕ, ўкрĕç те текех тăма пултараймарĕç. Штейнмец капитан вĕсене персе пăрахма хушрĕ. Вара унтер-офицер Леопольд вĕсене персе пăрахрĕ. Кăшт тăхтасан тата виçĕ пĕчĕк ача ўкрĕç. Штейнмец капитан ку ачасене персе пăрахма мана хушрĕ, эпĕ вĕсене çавăнтах персе пăрахрăм». Малалла Фатернамм хăй Шоерман обер-фельдфебельпе, Райман обер-фельдфебельпе, Райхгюльт капитанпа тата ыттисемпе пĕрле Брянск районĕнче, Софиевкăра, Терновой Балкăра, Бобринец районĕнче тата ытти вырăнсенче те советсен мирлĕ çыннисене вĕлерни çинчен калаçа кăтартать. Вальтер Фатернамм—салтак мар, хĕрарăмсене, стариксене тата пĕчĕк ачасене вĕлерсе пурăнакан вăрă-хурах. Çавăн пек ирсĕрсем Гитлер режимĕнче кăна пулса çитĕнме пултарнă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикинчи вырăнти промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕнчи, промысла коопераципе инвалидсен кооперацийĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Производство планĕсене ăнăçлăн тултарнăшăн Чăваш АССР-ĕнчи вырăнти промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕнчи, промкоопераципе инвалидсен кооперацийĕнчи уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Василий Павлович **Абрамова** — Етĕрне районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан промартелĕн производство заведующине.
2. Алексей Никонович **Авдеева** — Вăрмар райпромкомбиначĕн çăматăсем йăвалакан цех начальникне.
3. Василий Диомидович **Агеева** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакассинчи промартелĕн производство заведующине.
4. Елена Демьяновна **Агеевăна** — Елчĕк крахмал завочĕн патка тăвакан цехĕн мастерне.
5. Мартьян Антонович **Акулина** — Кувакино райпромкомбиначĕн мастерне.
6. Александра Ивановна **Александровăна** — Канашри «Швейник» промартелĕн мастерне.
7. Иван Александрович **Александрова** —Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан артель правленин председательне.
8. Михаил Александрович **Александрова** — Çĕмĕрле районĕнчи «Обод» артельти рабочине.
9. Алексей Андреевич **Андреева** — Шăхасан районĕнчи «Сталь» промартельти çĕвĕ çĕлекен цехри бригадире.
10. Яков Андреевич **Андреева**—Çĕрпўри çу завочĕн «Ударник» колхозра сĕт пухаканне.
11. Мария Ивановна **Анисимовăна** — Пăрачкав районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан артельти работницăна.
12. Тимофей Никитич **Анисимова** — Шупашкарти леспромартельти кочегара.
13. Гурий Кириллович **Апанасова** — Чăвашмельтрестăн главнăй инженерне.
14. Александр Васильевич **Антонова** — Канаш хула совет исполком председателĕн заместительне.
15. Николай Григорьевич **Аронова** — Пăрачкаври Папанин ячĕпе тăракан пулă тытакан колхозăн пулăçне.
16. София Артамоновна **Артамоновăна** —Çĕмĕрлери «Красный Октябрь» артельти тўмесем тăвакан цехри работницăна.
17. Дария Арсентьевна **Арсентьевăна** —Йĕпреç районĕнчи «Социализм» артельти работницăпа.
18. Алексей Афанасьевич **Афанасьева** —Клара Цеткин ячĕпе тăракан промартельти çĕвĕçе.

(Малалли пулать).

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Ўкерчĕк çинче: Пирĕн земляк—медицина службин старши лейтенанчĕ **Т. А. Антонов** юлташ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешўре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Антонов юлташа виçĕ хутчен наградăланă. Унăн çакăн пек орденсемпе медальсем пур: Хĕрлĕ Çăлтăрпа 2-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕсем, «За отвагу» медаль.

Тимофей Антонович Антонов юлташ Мăн Явăшра (Калинино районĕ) çуралса ўснĕ. Вăрçа кайиччен вăл Калинино районĕн сывлăх пай заведующийĕ пулса ĕçленĕ.

Ялти врач участокĕсен социализмлă ăмăртăвĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче ялти врач участокĕсен халăх сывлăхне сыхлас ĕçе лайăх организацилессишĕн пыракан республикăри социализмлă ăмăртăвĕн условине пăхса тухса çирĕплетрĕ. Ăмăртура мала тухакансене пама Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне тунă.

Ялти врач участокне Чăваш АССР Совнаркомĕн Хĕрлĕ Ялавне çак условисене пурнăçа кĕртнĕшĕн парассĕ:

участокри халăха чирсенчен сыватас тĕлĕшпе ĕçлекен тата санитари учрежденийĕсен ĕçне çирĕп план тăрăх организациленĕшĕн, участока кĕрекен ялсенчи фельдшер, фельдшерпа акушерка пункчĕсене, трахомăран, сивĕ чиртен сыватакан пунктсене, çавăн пекех венерологи тата ытти пунктсене, колхозсенчи ача çуратмалли çуртсене, ялсенчи тата вăхăтлăха ĕçлекен яслĕсене врач участокĕ енчен куллен ертсе тата пулăшса пынăшăн;

чиртен сыватас тĕлĕшпе ĕçлекен тата санитари учрежденийĕсенче кирлĕ пек культурăлăх тунăшăн, вĕсем валли хуçалăхпа медицина оборудованийĕ çителĕклĕ парса тăнăшăн, пĕтĕм çулталăк хушшинче лайăх ĕçлеме условисем туса панăшăн, пурлăха тĕрĕс шута илсе, лайăх упранăшăн, перекетленĕшĕн;

больницăсемпе амбулаторисенче чиртен сыватас ĕçе лайăх пахалăхпа организациленĕшĕн, чиртен сыватас ĕçре çĕнĕ меслетсемпе усă курнăшăн, сарăлакан чирсене пĕтернĕшĕн тата халăх чирлессине чакарнăшăн;

хăвăрт сарăлакан чирсене хирĕç кĕрешме, санитари ĕçне обществăллă санитари активне анлăн явăçтарнăшăн, халăх хушшинче санитари ĕçне кăтартуллăн туса пынăшăн;

ача учрежденийĕсен ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн, ялти пĕтĕм медицина работникĕсене ачасене чиртен сыхлас ĕçе явăçтарса ачасем чирлессине, вилессине, чакарнăшăн;

трахомăпа чирлисене пурне те эмеллес ĕçе явăçтарнăшăн, трахомăпа çĕнĕрен чирлессине пĕтернĕшĕн, сив чирпе тата ўт-пўпе венерологи чирĕсемпе чирлессине чакарнăшăн, туберкулез чирне хирĕç кĕрешмелли мероприятисене лайăх та вăхăтра пурнăça кĕртнĕшĕн;

призывниксемпе отечественнăй вăрçă инвалидĕсене чиртен сыватас, упрас ĕçе лайăх йĕркеленĕшĕн, ача интерначĕсене, шкулсене, çар çыннисен çемьисене, урăх облаçсенчен куçса килнĕ халăха медицина тĕлĕшĕнчен лайăх пулăшнăшăн;

медицина работникĕсен квалификацине çĕклес тата вĕсем хушшинче политикăллă воспитанипе культурăллă ĕçе лайăх йĕркеленишĕн.

Социализмлă ăмăрту итогĕсене кашни кварталта пĕр хутчен тăвассĕ.

Ăратлă ăйăр туянчĕç

СОВЕТСКОЕ. Исмендерти «Радио» колхоз лаша ĕрчетес енĕпе çине тăрса ĕçлет. Конюхсем лашасене пăхассине лайăх йĕркеленĕ. Лашасем çуракинче пачах ывăнмарĕç, çавăнпа та колхоз çуракине планпа пăхнинчен икĕ кун малтан вĕçлеме пултарчĕ.

[illegible]

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Вальмонтоне хулипе тинĕс хушшинчи районра тăшман çаплах вăйлăн хирĕç тăрать пулин те, американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем чи кирлĕ районсенче малалла куçнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем çаплах Виа Касселина шоссе çулĕ тăрăх хĕвеланăçнелле тапăнса пынă. Вĕсем Фрозиноне хулине туртса илнĕ тата ту хырçин тепĕр енчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Сора хулине йышăннă.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшман çарĕсемпе унăн вăрçă объекчĕсене тапăнса тăнă.

Çавăн пекех тата Югославири портсен сооруженийĕсем çине, тăшман çарĕсем пухăнса тăнă вырăнсем çине тата çул-йĕрсем çине бомбăсем пăрахнă.

Союзниксен авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсем Плоештири тата Турну-Северинри (Румыни) вăрçă объекчĕсене тапăннă. Çавăн чухне тăшманăн 43 самолетне персе ўкернĕ.

Союзниксен 23 самолечĕ хăйсен базисене каялла таврăнман.

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: американецсен çарĕсем Веллетри хулине флангсенчен çавăрса илнĕ, хуларан çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехри чи çўллĕ вырăнсене йышăннă. Американецсен çарĕсем тата Вальмонтоне хули районĕнче çĕнĕ çўллĕ вырăнсене тытса илнĕ, ку вырăнсенчен Рим хули курăнать.

Союзниксен авиацийĕн апрельпе май уйăхĕнчи ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: май уйăхĕнче союзниксен авиацийĕ оккупациленĕ Франци территорийĕнчи тăшман объекчĕсене тапăнса 65.000 вĕçеве яхăн тунă.

Апрель уйăхĕнче союзниксен самолечĕсем 160 объекта ытла атакăланă, çавăн чухне вĕсем 80.000 вĕçеве яхăн тунă.

Маас шывĕпе Сена шывĕ тата Шельда шывĕ каналĕсем урлă хывнă питех те кирлĕ шоссе çулĕсемпе чугун çул кĕперĕсене нумайĕшне ишсе антарнине пула, Çурçĕр Францине Кăнтăр-хĕвеланăç Франци хушшинчи чи кирлĕ çулйĕрĕсем нумайĕшĕ ĕçлемессĕ. Сена шывĕ урлă хывнă ишĕлмесĕр тăрса юлнă кĕперсем те çар хатĕрĕсем турттарса каçма юрăхсăр.

ПĔР УЙĂХ ХУШШИНЧЕ 60.000 ТОННА БОМБА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Англири сывлăш-çар вăйĕсен представителĕ пичет представителĕсене çапла калаçа кăтартнă: апрель уйăхĕнче Америка авиацийĕ Европăра 43.500 тонна бомба пăрахнă, вăл март уйăхĕнче пăрахнинчен 13.328 тонна ытларах пулать. Малтанлăха пухнă даннăйсем тăрăх, май уйăхĕнче Америка авиацийĕ 60.000 тонна бомба пăрахнă та ĕнтĕ.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Герцеговинăра Гацке районĕнче Югослави чаçĕсем нимĕçсен пысăк колоннине аркатса тăкнă.

Хĕвеланăç Боснире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсемпе нимĕç çарĕсем хушшинче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунта нимĕç çарĕсем ирĕке кăларнă территори çине тухма хăтланса çапăçаççĕ.

ЮГОСЛАВИН ИРĔКЕ КАЛАРНА РАЙОНĔСЕНЧЕ

ЖЕНЕВА, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Югославин ирĕке кăларнă территорийĕнче, вăл шутра Словенире те, пурнăç условийĕсем питех те йывăр пулин те, культура ĕçĕ майĕпен юсансах пырать. Пуринчен ытларах халăха хут вĕрентес тĕлĕшпе хытă ĕçлеççĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, хальхи вăхăтра Словенин ирĕке кăларнă районĕсенче 363 шкул ĕçлет, вĕсенче 24 пин ачана яхăн вĕренет, 619 учитель шутланать. Шкулсем фронтпа юнашар ларакан ялсенче те чылайĕшĕнче уçăлнă, нимĕç оккупанчĕсем пырса кĕрсе тапăнма пултарассине те пăхса тăмаççĕ. Çавăн пек районсенчен пĕринче, нумаях пулмасть, нимĕç оккупанчĕсем 10 учителе вĕлерсе кайнă. Анчах та учитель-патриотсем хăраса тăмаççĕ, шкулсем çĕнĕрен уçса вĕсенче ачасене вĕрентме тытăнаççĕ. Приморьере шкулсемсĕр пуçне çамрăксем валли каçхине вĕренмелли курссем уçнă. Халăха çутта кăларас ĕçе йĕркелесе ярас тĕлĕшпе вырăнти власть органĕсене нумай йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма лекет. Нимĕçсемпе вĕсен хўрешкисем культура вучахĕсене пур тĕлте те пĕтерсе тăкнă. Словенире пĕр округра кăна нимĕçсем 21 шкул пĕтерсе лартнă. Шкулти мĕн пур инвентаре пĕтернĕ. Шкулсен хăйсен çурчĕсем çуккипе ачасене нумай ялсенче хресченсен пўрчĕсенче вĕрентеççĕ.

ГЕРМАНИН КОНЦЕНТРАЦИЛЛĔ ЛАГЕРĔСЕНЧЕ СОВЕТСЕН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс Ассошиэйтн агентстви советсен тыткăна лекнĕ çар çыннисем Германин Баварири концентрациллĕ лагерĕсенчен пĕринче епле асапланса пурăнни çинчен пĕлтерет.

Пĕлтерўре çапла каланă: «Советсен тыткăна лекнĕ çар çыннисене нимĕçсем выçă усраса асаплантараççĕ, вара нумайĕшĕ тўсеймесĕр пĕтеççĕ. Тыткăна лекнĕ совет çыннисене гитлеровецсем питĕ хытă тыткалаççĕ. Концентрациллĕ лагерĕн вырăссем пурăнакан пайĕнче час-часах пăшал сасси илтĕнет. Вырăссене ытла та тискеррĕн тыткалани — нимĕçсен лагерĕнчи кулленхи ĕç пулса тăнă. Пĕрре нимĕçсем советсен тыткăна лекнĕ çар çыннисен ушкăнне тулама вĕсем [illegible]

ИСПАНИ ГЕРМАНИЕ ТАВАРСЕМ ПАРСА ТĂНИ ÇИНЧЕН РУЗВЕЛЬТ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Рузвельт президент пресс-конференцире çапла каланă: ман шутпа Испани Германие таварсем парса тăрассине халĕ те кирлĕ пек чакарман-ха. Рузвельтран çапла ыйтнă: США Испани тĕлĕшпе тытса пыракан политикăра мĕнле те пулин улшăнусем пулман-и?—тенĕ. Рузвельт çав ыйтăва хирĕç çапла каланă: тĕплĕн пăхсан, нимĕнле улшăнусем те пулман. Испани,—тенĕ вăл, — Германие нумай япаласем ярса тăнă, халь çав япаласене ярассине кăштах чакарнă, анчах та кирлĕ чухлĕ чакарман-ха, — тенĕ.

ФИНЛЯНДИ СУДНИСЕМ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИ АЛЛИНЧЕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем пĕлтерў пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерў тăрăх, майăн 20-мĕшĕнче Сундсвале Финлянди судни пынă. Судно çинче зенитнăй тупăсем самолетсене пеме хатĕр тăнă. Çав тупăсемпе пеыкеннисем нимĕç салтакĕсем пулнă.

Пĕлтерўре çакна асăрхамалла кăтартса çырнă: «пире çакă тĕлĕнтерет: Германирен Финлянди судни кăмрăк тиесе килет, çав Финлянди судни темĕнле майпа хăй çинче нимĕç салтакĕсене илсе çўрет», — тенĕ.

БОЛГАРСЕН ЭКОНОМИКĂЛЛА ДЕЛЕГАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ КАЙНИ

СОФИЯ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Германие болгарсен делегацийĕ тухса кайнă. Делегаци Болгарипе Германи хушшинчи суту-илўпе хуçалăх килĕшĕвĕн срокне малалла тăсасси çинчен калаçса татăлмалла.

БОЛГАРИ ОФИЦЕРĔСЕМ ТАРНИ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стамбулри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: паян Турцие болгарсен 7 офицерĕ (вăл шутра пĕр генерал) çитрĕç. Чикĕ урлă каçнă чухне вĕсене асăрхана та Болгари пограничникĕсем пеме пуçланă, генерала йывăрах амантнă. Çав офицерсем çапла каласа панă: эпир çак вăрçăра гитлерла Германи майлă пулса çапăçма килĕшместпĕр, çавăнпа та Болгарие пăрахса тухрăмăр, —тенĕ.

ВЛКСМ райкомĕсен кроса тивĕçлипе ертсе пымалла

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ хăшпĕр районсенче ăнăçлăн иртсе пырать. Малтанхи куп кроса республикипе 23.800 çын хутшăннă. Кросс уйрăмăнах çак районсенче организованно иртет: Çĕрпў районĕнче — унта пĕтĕмпе 3.580 çын хутшăннă, Шăхасан районĕнче — 1.786 çын, Етĕрне районĕнче — 1.044 çын, Тăвай районĕнче — 1.200 çын хутшăннă.

Анчах та хăшпĕр ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем кросăн пĕлтерĕшне тивĕçлипе ăнланса илмеççĕ. ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райкомĕн секретарĕ Н. Егорова, Ишлей райкомĕн секретарĕ Кузнецов, Йĕпреç райкомĕн секретарĕ Афанасьев юлташсем «Пирĕн вăл ĕçе тума алă çитеймерĕ» тесе лараççĕ.

Калас пулать, Сĕнтĕрвăрри хулинче кроса кăтартуллăн ирттерме пур майсем те пур. Унтах стадион пур. Аслă шкулсенче вĕренекен студентсем, учрежденисемпе предприятисенче çамрăксем чылай. ВЛКСМ райкомĕ ĕçе тивĕçлипе пуçарса пыманнине пула районра кроса мĕнпурĕ те 70 çын кăна хутшăннă. Йĕпреç районĕнче тата кроса ирттерме тытăнман та.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ — массăллă мероприяти. Унăн тĕллевĕ — спорт ĕçне ĕççыннисене анлăн явăçтарасси, массăллă спорт ĕçне малалла вăйлатса пырасси пулать. Кросăн программи çав задачăсене ăнăçлăн пурнăça кĕртме май парать те ĕнтĕ. Çавна комсомол руководителĕсен ăнланса илмелле.

Калинино промкомбинатĕнче массăллăн прогул тăваççĕ

КАЛИНИНО. Районри промкомбинат (управляющийĕ И. Борисов) производство планне кашни уйăхрах тултараймасть. Комбинат руководителĕсем плана тултарайманнине ĕç вăйĕ çитменнипе сăлтавлама пикенеççĕ. Анчах хăйсем комбинатра массăллăн прогул тунипе пĕтерессишĕн кĕрешмеççĕ.

Акă фактсем: çак çулхи мартăн 22-мĕшĕнче цехсенче тата конторăра ĕçлекенсем ирхине ĕçе вăхăтра çитмен, 10 çын 25 минутăран пуçласа 1 сехете çити прогул тунă. Районри «Коммунизм ялавĕ» хаçат ун çинчен çырса, ĕç дисциплинине пăсакансене законпа ответ тыттарма сĕннĕччĕ. Анчах та промкомбинат дирекцийĕ нимĕн те шарламарĕ, ĕçе суд аллине памарĕ. Прокуратурăпа суд органĕсенче ĕçлекенсем те çав йĕркесĕрлĕхе тĕрĕслемесĕрех ирттерчĕç.

Ĕç дисциплинине пăсакансене ответ тыттарманнине кура, промкомбинатра прогулщиксен йышĕ татах та ўсме пуçларĕ. Рабочисем ĕçе вăхăтра çитмеççĕ, унсăр пуçне тата хăш кун ĕçе пачах та пымаççĕ. Акă, атă-пушмак çĕлекен цехри рабочи И. Григорьев, нимĕнле сăлтавсăрах 2 кун ĕçе тухман. Çавăн пекех И. Мясниковпа Я. Кондратьев сапожниксем апрелĕн 24-мĕшĕнче ĕçе 9 сехетре çитес вырăнне 10 сехет иртсен тин пычĕç. Кун пек фактсене татах та илсе кăтартма пулать.

Комбинатри прогульщиксене тата вĕсене хўтĕлекенсене тивĕçлипе ответ тыттармалла.

Б. ШОРНИКОВ.

АЧА-ПĂЧА КĔНЕКИСЕМ

Юлашки вăхăтра Чăвашсен Государство Издательстви кĕçĕн тата вăтам çулхи ачасем валли кĕнекесем йышлăн кăларма тытăнчĕ. Çак кунсенче А. И. Крыловăн чи паха юптарăвĕсене 5 пĕчĕк кĕнеке туса кăларнă. Халь тата Ф. Уярăн, К. Чулкаçăн, Г. Красновăн, Н. Шелепин т. ыт. авторсен кĕнекисене производствăна панă. Пурĕ 50 кĕнеке таран тухмалла.

Кĕнекесем пысăк тиражпа—15—25-шер пин экземпляр тухаççĕ.

Ответлă редакторĕн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: технологсем, ОРС валли главнăй бухгалтер, секретарь-машинисткăсем, шутпа контора работникĕсем, кладовщиксем тата çакăн пек рабочисем: токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, электромонтерсем, контролерсем, строительнăй рабочисем, уборщицăсем, подсобнăй рабочисем тата курьерсем.

Вахтерсем (охранниксем), арçынсемпе хĕрарăмсем, тата пушарган сыхлакан работниксем кирлĕ. Хваттер параççĕ.

Заводăн транспорт цехне çакăн пек работниксем кирлĕ: рулевой е моторист-рулевой, моторсем, поездсем пухса хатĕрлекенсем, сцепщиксем, стрелочниксем, шоферсем, мотовозсем, вагонсене пăхакансем, çул рабочийĕсем, грузчиксем тата возчиксем. Общежити параççĕ.

Çавăн пекех тата урăх квалификацие вĕренес текенсене (14 çула çитнĕ е ултан иртнĕ çынсене) илеççĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 80. Бюро пропусков. Куллен 11 сехетрен пуçласа 3 сехетчен ыйтма юрать. 5—1

[illegible]

Шупашкарти кооперации техникумĕ çак отделенисене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет: бухгалтерсен отделенине, товароведсен отделенине, пĕрлешсе апатланас ĕçĕн отделенине.

2-мĕшпе 3-мĕш курспе техникумсенче çавăн пек курссенче вĕреннисене илеççĕ. 2-мĕш курса вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

3-мĕш курса вĕренме кĕнĕ арçынсене вĕренсе тухиччен çар службипе илмеççĕ.

Техникумра 3 çул вĕренмелле.

Заявленисене июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен илеççĕ. Испытанисем августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен пыраççĕ. Испытанисем вырăс чĕлхипе, литературăпа, Конституципе, математикăпа тата географипе пулаççĕ. 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем [illegible]

Студентсене пурне те стипенди параççĕ, [illegible]

Адрес: гор. Чебоксары, Театральная 1/5. Дирекци.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпа секретарăн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа яхусăлăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00159 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.